Сăмах – хуçалăх ертӳçине

Татса памалли ыйтусем те çук мар

Ял хуçалăх çулталăкĕ вĕçленсе пырать. Итогсене те пĕтĕмлетме вăхăт. Кăçалхи çанталăк условийĕсене шута илсен, япăх мар вĕçлетпĕр темелле ăна. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене кашни гектартан вăтамран 26 центнер пуçтарса кĕртрĕмĕр, çĕр улми тухăçĕ те 200 центнер ытла. Апла пулин те манăн паян çитĕнӳсем пирки кăна мар, çак кăтартусене татах ӳстермелли майсем-çулсем пирки сăмах хускатас килет.

Паллă ĕнтĕ, ял хуçалăх культурисенчен ытлă-çитлĕ тухăç илес тесен, агротехника требованийĕсене кирлĕ пек пурнăçласа пымалли пирки калама та кирлĕ мар. Пурте пĕлетпĕр ун пирки. Пур ĕçсене те хăй вăхăтĕнче, пахалăхлă туса ирттермесĕр палăртнине пурнăçлама çук. Удобренисемпе тĕллевлĕ усă курасси те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Кунпа пĕрлех тата манăн кĕрхи çĕртме пĕлтерĕшĕ çинче чарăнса тăрас килет. Епле пулсан та унăн пĕлтерĕшне чакарма çук. Хальхи вăхăтра тăкаксене чакарма май паракан, харăсах тĕрлĕ операци пурнăçлакан агрегатсем пирки нумай калаçаççĕ. Вĕсемпе усă курмалла мар тесе каламастăп, апла пулин те вĕсем çине шанса кĕрхи çĕртме сухи пирки манса кайни ан пултăрччĕ.

Хамăр хуçалăхри пĕр тĕслĕх кăна. Иккĕмĕш производство участокне чылайранпа ĕнтĕ Г.Н. Афанасьев ертсе пырать. Иртнĕ çул кунта пĕтĕм лаптăк çинче кĕрхи çĕртме сухаларĕç. Кĕрхи культурăсене 100 гектар ытла акса хăварнă. Акă, результат – пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсен тухăçĕ гектар пуçне вăтамран 37 центнерпа танлашрĕ. Çав вăхăтрах 4-мĕш производство участокĕнче кĕрхи çĕртме ĕçĕсене палăртнă чухлĕ туса хăвараймарăмăр. Ертсе пыракан кадрсем енĕпе те, механизаторсем тĕлĕшпе те татса памалли ыйтусем витĕм кӳчĕç. Тĕш тырă культурисен тухăçĕ те кунта 13 центнертан ытла пулаймарĕ. Пĕр пек условисенчех расналăх 3 хут ытла. Кĕрхи ĕçсене йĕркеллĕ туса ирттернĕ пулсан хуçалăхĕпе тухăç гектар пуçне 30 центнертан кая мар пулмаллаччĕ.

Çавăнпа та татах тепĕр хут палăртса хăваратăп. Кĕрхи çĕртме сухи тăвассине манăça хăварма кирлĕ мар. Халĕ эпир вара тыр-пула пухса кĕртетпĕр те ку лаптăксем пирки манса каятпăр. Кăçалхи ĕçсене вĕçленĕ, çитес çулхине куç курĕ тетпĕр пулмалла. Тĕрĕссипе çĕртме сухи ĕçĕсене туса ирттерме 10-шар трактор та кирлĕ мар. Ĕçсене тивĕçлипе йĕркелесе пырса агрегатсене тухăçлă ĕçлеттермелле çеç.

Кĕрхи культурăсен тухăçĕ çурхисенчен пысăкраххи паллă. Кĕрхи культурăсем çине çанталăкăн япăх условийĕсем те ытлашши пысăк витĕм кӳреймеççĕ. Апла пулсан кĕрхи культурăсем тĕлĕшпе çине тăрарах ĕçлени кирлĕ тесе шутлатăп. Акă, клевер пулнă çĕртме пуссисене акнă кĕрхи культурăсем япăх мар тухăç параççĕ. Азот та нумай сыхланса юлать унта. Тепĕр май каласан, удобренисемпе апатклевера 500 гектар çинче акса хăварма палăртатпăр. Çавна валли вăрлăх янтăланă ĕнтĕ.

Хамăрăн ĕç мелĕсем пирки каласа хăварас килет. Кивĕлле ĕçлессинчен ниепле те хăпма пултараймастпăр. Паян 20-30 çул каяллахи пек ĕçлесен май лантарнипе пĕрех. Тĕслĕх патне инçе кайма кирлĕ мар. Иккĕмĕш производство участокĕнче пĕлтĕр клевер пулнă лаптăкра 80 гектар çинче кĕрхи культура акрăмăр. Кĕркунне вара кашни гектар пуçне ăна 42 центнер пухса кĕртме май килчĕ. Çавна май çитес çул çук. Специализаци пулмалла. Пĕр хуçалăхра аш-какай туса илессипе, тепĕр хуçалăхра сĕт туса илессипе ĕçлеччĕр, унтан тепринче тĕп производство тĕш тырă туса илесси пултăр. Халĕ эпир вара кашни хуçалăхрах пур енĕпе те ĕçлетпĕр. Кун пек чухне уйрăмах хаклă тăракан хальхи ял хуçалăх техникине пур йышши ĕçсене пурнăçлама кашни хуçалăх мар, пĕр хуçалăх та туянма вăй çитеймест. Çĕнĕ техникăсăр сухапуçпе кăна малалла каяймăн. Уйрăм специализаци пулсан, ятарлă техника туянма та майсем пулĕç. Ку тĕлĕшпе холдингсем, агрофирмăсем йĕркелени тĕрĕс тесе шутлатăп. Çапла вара продукци туса илессине ӳстерме, унăн хăй хаклăхне чакарма, сахал ĕç вăйĕсемпех ытларах продукци туса илме майсем уçалĕç. Унăн конкурентлăхĕ пысăкланĕ. Продукци туса илесси ӳсет, унăн хăй хаклăхĕ чакать пулсан вара ĕçлекенсене ытларах ĕç укçи тӳлеме те май пур. Халĕ вара ял хуçалăх продукцийĕн хăй хаклăхĕ пĕчĕк мар.

Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсен ĕç укçи тӳлевĕн йĕрки пирки те каласа хăварасшăн. Хальхи вăхăтра ĕçшĕн тӳленĕ чухне расценкăсем, разрядсем тата ытти пирки сăмах пырать. Ятарлă специалист кăна вĕсене ăнланма пултарать. Тĕрĕссипе вара ĕçлекен кашни çын хăй кунне миçе тенкĕ ĕçлесе илнине пĕлсе тăтăр. Çавăн чухне кăна вăл татах тăрăшарах, тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшĕ.

Акă, кăçал сенаж хывма симĕс масса çулса вĕтетсе транспорт çине тиесе паракан механизаторсем валли ятарлă расценкăсем палăртса хăйсене пĕлтертĕмĕр. Кам миçе тонна симĕс масса çулса миçе тенкĕ ĕçлесе илни пĕтĕмпех паллă. Владимир Матвеев КСК-100, Сергей Иванов Дон-680 агрегатсемпе лайăх ĕçленĕ кунсенче кунне 1000-шер тенкĕ ĕçлесе илме пултарчĕç.

Çулленех çĕр улмине пысăк лаптăк çинче çитĕнтеретпĕр. Кунта та ĕç укçи тӳлессинче конкретлăх, уçăмлăх тĕп услови пулса тăрать. Комбайнпа çĕр улми кăларакан механизаторсене кашни тонна пуçне 20 тенкĕ тӳлеме палăртрăмăр. Йĕркеллĕ условисенче пĕр агрегат кунне 100 тонна çĕр улми кăларма пултарать. 500-шер тонна çĕр улми склада кĕртнĕ. 4-мĕш производство участокĕн механизаторĕ кунне 150 тонна çĕр улми кăларчĕ. Ку вăл 6-7 гектарпа танлашать. Тепĕр май каласан, унăн çав кунсенче ĕç укçи кунне 3000 тенкĕпе танлашрĕ. Çапла вăл куллен мĕн чухлĕ ĕçлесе илессине пĕлсе тăрать, тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшать те.

Юлашкинчен çавна каласа хăварасшăн. Ял хуçалăхĕнче ĕçлесси, çĕр ĕçĕ нихăçан та çăмăллисен шутĕнче пулман. Юлашки вăхăтра пушшех те. Апла пулин те такам килсе туса парасса шанса ларни тĕрĕс çул мар. Хамăр çинех ытларах шанас пулать, йывăрлăхсене хамăр вăйпах çĕнтерсе пыма тăрăшас пулать. Ун чух ӳсĕмсем те пулаççех.

П. ДАВЫДОВ,
«Ударник» сăнавпа производство хуçалăх ертӳçи.



Владислав Валентинович Аркадьев – «Ударник» хуçалăхри пултаруллă та хастар водительсенчен пĕри. ҐАЗ-53 автомашинăпа ĕçлет вăл. Тĕрлĕ тиевсем турттармалли ĕç хуçалăхра куллен тупăнсах тăрать. Хушнă кирек епле ĕçе те вăл ответлăха туйса пурнăçлама тăрăшать. Автомашинăна та яланах юсавлă тытать.

Йывăрлăхсене çĕнтерме, малашлăха утма тăрăшатпăр

Час-часах паянхи рынок хутшăнăвĕсем ял хуçалăхне тĕпсĕр авăр хĕрне илсе пынине хăш-пĕр ертӳçĕсем тимлесех ăнлантарма тăрăшнă хушăра, теприсем аталанма май пуррине ĕçпе çирĕплетсе параççĕ. Ылтăн кĕр кунĕсем çитрĕç те, ваттисем каларăшле, чĕпсене шутлатпăр е ку таранччěнхи ĕçе пĕтĕмлететпĕр. Çак тĕллевпе эпĕ Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçипе И.В. НИКОЛАЕВПА калаçрăм, пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллаштарма ыйтрăм.

– Игорь Васильевич, кăçалхи ĕçсем пирки пĕтĕмĕшле мĕн калама пултаратăр?

– Çуркуннехи ăшăран пуçланă мĕн Пукравччěнех ял çыннишĕн канăçсăр вăхăт пырать. Ку тапхăрта шутлă кун хушшинче акса хăвармалла, тĕрĕстĕкел ӳстермелле, çителĕклĕ выльăх апачĕ хатĕрлемелле, кĕрхи ĕçсене пĕр тăкаксăр пурнăçлама тăрăшмалла.

Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене пĕтĕмпе 1518 тонна пухса кĕртнĕ, кашни гектартан вăтам виçепе 25 центнер тухăç илнĕ. Тыр-пула пухса кĕртес ĕç комбайнерсем çине тиенет. Кăçал вырмара хăйсен ĕçне тивĕçлĕ шайра пурнăçларĕç, вĕсене ятран асăнса хăварас килет: Ю. Егоров (465 тонна), В. Аврамов (314 тонна), В. Семенов (284 тонна), Е. Васильев (232 тонна), А. Иванов (223 тонна) кĕске вăхăтрах çапса тĕшĕленине Ю. Михеев (756 тонна), А. Макаров (520 тонна), Ю. Мадиков (242 тонна) водительсем йĕтем çине турттарса тăчĕç.

Çĕр улми тухăçĕ кăçал пире савăнтарчĕ. Ăна 70 гектар çинчен 14235 центнер пухса кĕртрĕмĕр. Унăн тухăçĕ пурĕ 203 центнерпа танлашрĕ. 1-мĕш бригадăра 250 центнер пулчĕ, 2-мĕш бригада тухăçĕ 201 центнера çитрĕ, 3-мĕшĕнче вара 153 центнера ларчĕ. Çакна уйрăмах палăртас килет, 1-мĕш бригадăри уйра 15 гектар çинче 355 центнерпа танлашрĕ.

Çĕр улми лартас тата турттарас ĕçре В. Степанов, А. Васильев, Л. Макаров трактористсем аван ĕçлерĕç. Ретсем хушшине кăпкалатассине Н. Петрова шантăмăр. Çак ĕçе хутшăннă водительсене те ырăпа асăнса хăварас килет. И. Никитин, Ю. Мадиков, М. Степанов хушнă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçларĕç. "Иккĕмĕш çăкăра" вăхăтра тата тирпейлĕ пухса кĕртрĕмĕр. Çак ĕçре хуçалăха шкулсен коллективĕсем пысăк пулăшу пачĕç. Уншăн вĕсене пысăк тав сăмахĕ калас килет.

Çуллахи кунсенче культурăсене лайăх апатлантарса пăхса çитĕнтерес, хурт-кăпшанкăсемпе, çум курăксемпе, ӳсентăран чирĕсемпе кĕрешесси çине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Çавăн пекех эпир Турай тăрăхĕнчи пушă выртакан çĕрсен шучĕпе хамăр хуçалăх çĕрĕсен лаптăкĕсене пысăклатса, пĕтĕмĕшле тырă туса илессине, обществăлла выльăхчĕрлĕх йышĕпе продуктивлăхне, ĕçлекен халăх ĕç укçине ӳстерсе, çапла майпа хуçалăх экономикине тĕпрен витĕм кӳме тăрăшрăмăр.

– Элита вăрлăхсемпе мĕнле ĕçлесе пыратăр?

– Çакăн çине эпир ытларах тимлĕх уйăрма пуçларăмăр. Элитăллă, пысăк репродукциллĕ тата кондиции ларакан вăрлăхсемпе ĕçлеме тăрăшатпăр. Çĕнĕ сортсемпе ĕçлени тухăçпа пахалăха ӳстерме пулăшать. Паянхи кун перспективлă элитăллă вăрлăхсене туянма патшалăх дотаци парать. Унăн пахалăхне тăтăшах районти патшалăх вăрлăх инспекцийĕнче тĕрĕслеттеретпĕр.

– Хуçалăхра пулас тыр-пул пирки шутлани те курăнать, акнă уйсенчи симĕс калчасем хитре ешереççĕ.

– Çапла, пулас тыр-пул никĕсне кĕркуннех хывса хăварасшăн çине тăрсах тимлерĕмĕр. Кĕрхи культурăсене агротехникăпа палăртнă кирлĕ вăхăтра 300 гектара яхăн акса хăвартăмăр. Иртнĕ çул 200 гектара яхăн пулнă. Кĕрхи культура ялан тенĕ пекех çуркуннехинчен пысăкрах тухăçпа савăнтарать. Кĕркунне ытларах акни çур акинче ытти ĕç çине ытларах тимлĕх уйăрма май парать. Анчах та калчасем тĕрĕс-тĕкел хĕл каçчăр тесен кирлĕ ĕçе вăхăтра пурнăçламалла.

– Машина-трактор паркне çĕнетесси çине мĕнле пăхатăр?

– Йывăрлăхсем çав тери пысăк пулин те, хуçалăх машина-трактор паркне çĕнетесси çине тимлĕх уйăрать. Хуçалăхра темĕнле çĕнĕ технологие çул уçсан та, машинăпа трактор паркне ĕçлевлĕ тытасси малти вырăнта тăрать. Енчен те çакна пурнăçласа пымасан, 25 процент çеç ĕçлекен тракторсене юсасах хуçалăх экономикине хавшататпăр.

Пурнăç çапла ыйтать, малалла пире хăватлă, комбинированнăй агрегатсем ытларах кирлĕ, тăкакĕсем те сахалланччăр. Иртнĕ çул илнĕ трактор тухăçлă ĕçлерĕ: икĕ машина солярка перекетлерĕ. Кăçалхи тăхăр уйăхра эпир ХТЗ- 17221 маркăллă трактор, ГАЗ-53 автомашина, "Енисей" комбайн тата ытти йышши агрегатсем туянма пултартăмăр. Çак çĕнĕ техникăсемпе пирĕн çанă тавăрсах ĕçлемелле.

– Хуçалăхра Голланди "Провими" технологийĕпе усă курма пуçлани тупăш çине витĕм кӳрет-и?

– Хуçалăхра çак ĕç çине куçни тупăшăн пысăк çăл куçĕ пулса тăрать. Ку технологие алла иличчен пулма пултарайман пулăм пекех туйăнатчĕ. Тавах район администрацийĕн пуçлăхне Юрий Александровича вăхăтра çак ĕç çине куçма хистенĕшĕн. Вĕсем ял хуçалăх аталанăвĕшĕн, пире ăнланса пулăшнăшăн эпир савăнатпăр. Пирĕн вара çакна производствăра çирĕплетмелле. Малтан тăкаклă пулнă ферма халĕ пысăк тупăш парать. Çакăнта ĕçлекенсем те çĕнĕ технологипе питĕ кăмăллă. Кунта ялан типĕ, ăшă, таса. Чи пахи вара кунта – 4 çын пĕтĕм ĕçе пурнăçласа ĕлкĕрет, çутă тăкакламалла мар. Паянхи куна çакăнта вăй хуракансен уйăхри ĕç укçи 6 пин тенкĕпе танлашать. Çавăнпа та пирĕн çĕнĕрен те çĕнĕ технологисене алла илме хăнăхмалла. Киввисене (мĕншĕн тесен вĕсем тăкаклă теме хăнăхрăмăр) майĕпен пăрахăçламалла. Ахальтен мар район пуçлăхĕ пире тăтăшах ытти регионсен опычĕпе паллашма илсе тухать. Малалла та çаплах пултăрччĕ. Кĕртекассинчи ферма ĕçченĕсене, ертӳçине Н. Иванована тата Д. Тимофеева зоотехника ырăпа асăнас килет.

Хĕле валли эпир выльăхчĕрлĕх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ, ытти çулхинчен самай ытларах.

– Паянхи кун хуçалăхра мĕнле ĕçсем пурнăçлама палăртнă?

– Паянхи кун, хуçалăхра уйхирсенче тĕп ĕçсем вĕçленнĕ пулин те, кулленхи ĕçсене малаллах туса пымалла. Паянхи кун вĕсем çаксем пулса тăраççĕ. Вăрлăхсене аласа акма юрăхлă кондиции çитермелле. Кĕрхи çĕртме сухине вĕçлемелле. Ĕçе вĕçленĕ ял хуçалăх техникине çуса-тасатса упрама тирпейлĕн лартмалла. Вĕсене çур аки ĕçĕсене хатĕрлеме тытăнмалла, çĕмĕрĕлни-ваннисене юсаса усă курма хатĕрлемелле.

– Сире патшалăх çителĕклĕ пулăшать-и?

– Ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсене патшалăх пулăшать тесе калас килет. Çăмăллатнă условисемпе кредитсем парать, лизинг мелĕпе техника туянма майсем пур, бюджетран çин калăпăшĕ иртнĕ çул 1972 тенкĕпе танлашнă. Кăçал вара 2095 тенкĕне çитрĕ. Хуçалăхра вăй хуракансене тивĕçлĕ условисем туса пама, ытти енчен те ăнланма тăрăшнă. Енчен те хуçалăх ĕç укçине вăхăтра тӳлет тата унăн калăпăшĕ те пĕчĕк мар пулсан, эпĕ те вĕсенчен тивĕçлĕ ыйтма пултаратăп.

Хуçалăхăн кассине иртнĕ çулхи 9 уйăхра 10636 пин тенкĕ кĕнĕ. Кăçалхи çак тапхăрта ăна 13884 пин тенке çити ӳстернĕ. Çакна эпĕ чи малтан хуçалăхра вăй хуракан кашни çын ответлăха туйса ĕçленипе, ман енчен тивĕçлĕ дисциплина пулнипе ăнлантаратăп.

Кăçалхи 9 уйăхра эпир 7982 центнер сĕт суса илме пултартăмăр, ку вăл, иртнĕ çулхи 9 уйăхпа танлаштарсан, 47 центнер ытларах. Пĕр ĕне пуçне ларакан сăвăм иртнĕ çул 3161 килограмм пулнă пулсан, паянхи куна 3180 килограма çитнĕ. Пĕтĕмĕшле чĕрĕ виçепе ашкакай туса илесси 1518 центнерпа танлашрĕ, иртнĕ çулхинчен 338 центнер ытларах.

– Юлашкинчен мĕн суннă пулăттăр?

– Пукрав асаттесен уявĕ пулнă. Çак тĕле ял хуçалăх ĕçченĕсен уявĕ те пĕр килет. Уяв ячĕпе эпĕ чи малтан хуçалăх ĕçченĕсене ырми-канми ĕçленĕшĕн, хуçалăх пуласлăхĕшĕн вăй хунăшăн тата тăрăшнăшăн чун-чĕререн тав тăватăп. Малашне те ӳсĕмлĕ ĕçлеме сывлăхлă, телейлĕ пулма сунатăп. Çавăн пекех хамăн ĕçтешсене çутă малашлăха туртăнса, шанчăка çухатмасăр ĕçлеме тулли вăй-хăват сĕнетĕп.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Сăн ӳкерчĕксенче: Г. Павлов çĕртме сухи тăвать; акă, курăр, еплерех кунта; çĕнĕ йышши ХТЗ-17221 трактор.